* * *

*В. П. Эхмере*

Савнӑ хӗр,
Хитре хӗр!

Ювататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать:
«Санӑн ҫутӑ илемшӗн
Манӑн шухӑш пӑтранать,
Эпӗ сана курсассӑн,
Хӗвел тухнӑн туйӑнать...»

Савнӑ хӗр,
Хитре хӗр!

Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать:
«Эсӗ куҫран пӑхсассӑн,
Манӑн чӗре ҫӗкленет,
Эсӗ сӑмах хушсассӑн,
Манӑн чунӑм ҫӗнелет...»

Савнӑ хӗр,
Хитре хӗр!

Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать:
«Сана чунтан юратса
Ыталаса макрӑттӑм.
Сана пӑхса, савӑнса
Ӗмӗр санпа пурнӑттӑм...»

Савнӑ хӗр,

Хитре хӗр!

Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать:
«Ытарайман пиркипе
Ыталаса йӗрӗттӗм,
Сана пӑхса, савӑнса
Санпа кӑна пурнӑттӑм...»

Савнӑ хӗр,
Хитре хӗр!

Эсӗ мана те саван.
Ӑна купӑс каламасть...

1912 ç., çулла, Чӗмпӗр